Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 МАРТ 18 ЕРНЕКУН
63 (4876)-мĕш №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомĕн хаçачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

ПАРИЖ КОММУНĔ

Совет халăхĕпе пĕтĕм тĕнчери пролетарисем историлĕ чаплă куна—1871 çулта мартăн 18-мĕшĕнче Париж коммунĕ пуçланнине çуллепех пысăк паллă тăваççĕ. Вăл кун—рабочи клас ирĕке тухассишĕн буржуазие хирĕç кĕрешсе пынă историре калама çук паллă кун пулса тăрать.

Пĕтĕм ĕççынисем, малала туртăнакан пĕтĕм етемлĕх çак куна паллă туса, фашисла çынвĕлерепсене хирĕç, демократипе культурăн çав тăшманĕсене хирĕç, вăрçă чĕртекенсене хирĕç кĕрешме вăйсене пĕрлештереççĕ. Фашиссем—халĕхи вăхăтра тиерсемпе галифесем—йут çĕрсене çаратаççĕ, хуласемпе йалсене ишĕлтереççĕ, çынсене çĕршер пинĕн вĕлереççĕ, пим айăпсăр ачасем, ĕстариксем, хĕрарăмсем çине бомбăсем пăрахаççĕ. Çак иртнĕ кунсенче çеç германи фашисĕсем Австрийе пусмăрласа йышăнса илчĕç. Фашисла вăрă-хурахсем мĕне ĕмĕтленнине пĕтĕм тĕнче курчĕ!

Париж коммунĕн урокĕсене, ССР Союзĕнчи социалисăмла аслă революци историне асра тытса, пĕтĕм тĕнчери ĕççынисем капитала хирĕç, фашисăма хирĕç кĕрешсе пыраççĕ.

Париж коммунĕ—пролетариат диктатурин пирвайхи опычĕ пулнă. Унчухне Парижри рабочисем историре пирвайхи хут влаçа хăйсен аллине илнĕ. Вĕсем 72 кун хушши влаçа тытса тăнă, тискер буржуази тапăннипе Париж коммунарĕсем йун айне пулнă, анчах вĕсем йун йухтарни ахаль пĕтмен. Аслă Совет Союзĕнче—Париж коммунарĕсен ĕмĕчĕсем, вĕсем пуçарнисем аслăн ÿсĕнсе пурнăçа кĕчĕç.

Çавăнпа ĕнтĕ Совет Союзĕнчи халăхсем пайанхи кун, Париж коммунарĕсене асăнса, Ленин—Сталин партийĕн аслă çĕнтерĕвĕсене чĕре тулли хаваслăхпа паллă тăваççĕ. Совет Союзĕнче етемлĕх историнче пирвайхи хут чăн-чăн демократи тунă, капиталиссемсĕр, помещиксемсĕр, кулаксемсĕр строй тунă,—кунта çынна çын експлоатацилени çук. ССРС халăхсен аслă çемйи—Сталинла Конституци йалавĕпе, паттăр та мухтавлă Хĕрлĕ Çар тата государствă хăрушсăрлăхĕн органĕсем хÿтĕлесе тăнипе—телейлĕ пурăнать, пур ĕççене те анăçлă туса пырать. Совет Союзĕ пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисене капиталисăмла чуралăхна пусмăртан тухмали пĕртен-пĕр тĕрĕс çула кăтартса тăрать.

Пирĕн аслă çулпуççем Ленин тата Сталин Октябĕрти социалисăмла революцийе тума хатĕрленĕ чухне тата революци вăхăтĕнче йаланах Париж коммунĕн опычĕсене асра тытнă. Париж коммунарĕсем 72 кун хушшинчех сахал мар ĕçсем тунă. Коммунă—кивĕ çара, йаланхи çара пĕтерсе, халăха хĕçпăшаллантарнă, чиркÿве государствăран уйăрнă, ачасене тÿлевсĕр вĕрентмеле тунă, рабочисен пурнăçне лайăхлатмали ĕçсене тунă, вĕсем çине штрафсем хума чарнă, хватер укçи тÿлесе татманнисене 10 уйăхшăн каçармала тунă.

Анчах тĕнчери лару-тăрува пула тата шалти сăлтавсене пула, Париж коммунĕ ун умĕнче тăнă историлĕ задачăсене пурнăçа кĕртеймен. 1871 çулта Францири рабочи класăн вĕçне çити революцилĕ парти пулман,—çавă вăл Париж коммунĕ пĕтнин чи пысăк сăлтавĕ пулнă. 1917 çулта Ленин—Сталин партийĕ пулнипе, вăл йертсе пынипе пирĕн Октябĕрти социалисăмла революци çĕнтерÿлĕ пулчĕ. 1871 çулта Парижри рабочисем Францири ытти хуласенчи рабочисемпе çыхăнайман, хресченсене хăйсем майлă çавăрайман. Пирĕн ССР Союзĕнчи рабочи класпа хресчен союзне тунă, вăл союз аслă çĕнтерÿсем тума, социалисăмла обществă тума май пачĕ.

Париж коммунарĕсем хăйсен класлă тăшманĕсем çине çемçешкелĕ пăхнă, çавă вĕсен калама çук пысăк йăнăшĕ пулнă. Рабочи класăн хайар тăшманĕсем Парижрен ним чарусăрах Версале кайса, унта революцийе йун ăшне тума вăйсем пухнă. Коммунă кунĕсенче Парижре шпионсем, провокаторсем, диверсантсем, саботажниксем темĕн чухлех пулнă, вĕсем революци ĕçне сутнă, хăйсен хура ĕçне тунă, Париж коммунарĕсем çав шалти тăшмансемпе çителĕклĕ таран кĕрешмесĕр пысăк йăнăш тунă. Çавна епĕр нихăçан та манма пултараймастпăр.

ССР Союзĕнчи рабочи клас çирĕм çул хушши ытла ĕнтĕ влаçа тытса тăрать, пирĕн çĕршывра социалисăм татăклăнах çĕнтернĕ, анчах тăшмансем пĕтмен-ха. Епĕр капиталисăмла йĕри-тавралăхра пурăнатпăр, пирĕн çине вăрçăпа тапăнас хăрушлăх, тăшмансем ССР Союзĕнче капиталисăма кайала тапăрма хăтланас хăрушлăх пĕтмен. Йутçĕршыв разведкисем пирĕн пата шпионсемпе диверсантсене йараççĕ, вĕсем çĕмĕрсе тăкнă помещикла-капиталисла классен йулашкийĕсемпе, сылтăмла-троцкисла тата ытти йышши бандитсемпе пĕрле совет халăхне хирĕç контрреволюцилĕ ĕçсем тăваççĕ. Çав тискер тăшмансене çĕмĕрсе, пĕтерсе пырасси малала та çĕнтерÿсем туса пымалли кирли пулса тăрать. Сталин йулташ çапла калать: „Нимĕнле „ăпсăртлăх" та тата пирĕн тулти тăшмансен нимĕнле фокусĕсем те пире кĕтмен çĕртен ыырса ан тивчĕр тесе, хамăрăн пĕтĕм халăха вăрçăпа тапăнас хăрушлăх умĕнче мобилизацилĕ хатĕр тытса тăмала..." Совет Союзĕ çине вăрçăпа тапăнасшăн çунакан фашиссен агенчĕсене, шпионĕсене, диверсанчĕсене — троцкисла-бухаринла ирсĕрсене, национал-фашиссене халиччен пекех тĕп туса пымала! Çак иртнĕ кунсенче Верховнăй Судăн Çар Коллегийĕн приговорĕ тăрăх бухаринла-троцкисла фашисла бандăн пуçлăхĕсене—урнă йытăсене персе вĕлерни пирĕн çĕршыв тĕнчери фашисăма хирĕç кĕрешÿре питĕ те пысăк çĕнтерÿ тунипе танах пулать.

Париж коммунарĕсене асăннă кун пирĕн шухăш-кăмăлсем—Испанири ĕçхалăхĕпе, Китайри ĕçхалăхĕпе пĕрле. Вĕсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн Германипе Итали фашисăмне хирĕç, Йапони военщинине хирĕç паттăрăн кĕрешеççĕ. Вĕсен кĕрешĕвĕ малала туртăнакан пĕтĕм етемлĕхĕн ĕçĕ пулса тăрать.

Капиталисла, фашисла çĕршывсенчи тĕрмесенче рабочи клас ĕçĕшĕн, ĕçхалăхĕн интересĕсемшĕн кĕрешекенсем пит нумай асап тÿсеççĕ. Пирĕн тăван çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем фашисăма хирĕç кĕрешекенсемпе пĕр шухăшлă! Фашисăмран асап тÿсекенсене пулăшасси — пĕтĕм етемлĕхĕн ĕçĕ. Çакна асра тытса, МОПР-а тата ытларах вăйлатса пырар!

Фашисăма хирĕç йухăм, фашисăма хирĕç, вăрçа хирĕç халăх фрончĕ пĕтĕм тĕнчипех сарăлса, вăйланса пырать. Коммунисла Интернационал влийанийĕ пур çĕршывсенче те ÿссе пырать.

Пайан—Париж коммунĕн кунĕнче — епĕр Испанин тата Китайăн паттăр халăхĕсене хĕрÿлĕ салам йаратпăр, фашисла палачсемпе империалисла тискер кайăксене çĕмĕрсе тăкма сунатпăр.

Пайан—Париж коммунĕн кунĕнче — совет халăхĕ Германири рабочи класăн çулпуçне Тельман йулташа, Венгрири коммунă геройне Ракоши йулташа, фин халăхĕн телейĕшĕн хăйулă кĕрешекен Антикайнен йулташа, рабочи класа ирĕклĕхе кăларассишĕн, капитал пусмăрне хирĕç, фашисăма хирĕç кĕрешекенсене пурне те хĕрÿлĕ салам йарать!

„Çурçĕр полюсĕ" станцинче хĕл-каçакансем—СТАЛИН йулташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Халь, пирĕн експедици вĕçне çитсе пынă чух тата епĕр Мускав патне çывхарса пынă чух, хамăрăн йуратнă учителĕмĕр, тусăмăр патне—Сирĕн пата çырас килет. Епĕр йаланах—йăвăрлăх кунĕсенче те, хаваслăх кунĕсенче те Сирĕн çинчен шухăшлама хăнăхнă.

Епĕр, Сирĕн заданине пурнăçа кĕртсе, Çурçĕр полюсне алла илсе тата сăнаса вĕренсе, тăхăр уйăх хушши ишсе сÿрекен пăр çинче пурăнтăмăр. Хамăрăн пĕтĕм ĕçсене, хамăр вăй хурса тăрăшнисене, хамăрăн ăслăлăхлă ĕç результачĕсене епĕр Сире, Иосиф Виссарионович, халаласа паратпăр, çавăн пекех епĕр хамăрăн пурнăçсене те тахçанах ĕнтĕ Ленин—Сталин партине халаласа панă.

Епĕр мĕн туни, ку вăл тăватă çын хăйсем çеç тунă чаплă ĕç мар, техникă тĕлĕшĕнчен йе ăслăлăх тĕлĕшĕнчен тунă кашни çĕнтерÿ вăл—пĕтĕм çĕршыв культури мĕнле çÿлте тăнин палăрăмĕ. Пирĕн експедицин çитĕнÿвĕсене тумашкăн Есĕр йертсе пынипе 20 çул хушши социалисăмлă çĕнтерÿсем туса хатĕрлесе тăнă.

Çурçĕр полюсĕ çине вĕçсе пынă чух тата хамăр пăр çинче пурăннă вăхăтра, епĕр совет çĕршывĕн хăватне, унăн техникине, вăл темĕнле ĕç те тума пултарнине туйса тăнă. Çавăн пек туйăмпа вара ĕçлеме те, пурăнма та çăмăлччĕ. Совет халăхĕ çĕнтерÿçĕ пирĕн хыçра тăнă, вăл пире тăванла пулăшу аллине тăсса пама йаланах хатĕр пулнă. Есĕр, Сталин йулташ, хамăр халăха çÿлĕ вырăнта тăракан мораллĕ пахалăхсем паттăр, çав пахалăх совет çыннисенче йаланах палăрса тăрать.

„Çурçĕр полюсĕ" станцинче епĕр çакна пĕлсе тăнă: Мускава, Сирĕн пата, хаклă Иосиф Виссарионович, пирĕн çĕнтерÿпе кăна тавăрăнмала пулнă. Хаl ĕнтĕ епĕр Сирĕн пата хамăр çĕнтерÿ итогĕсене илсе пыратпăр.

Иван Папанин.
Петр Ширшов.
Ернст Кренкел.
Йевгений Федоров.

1938 çулхи, март.
Ленинград.

Сывă-и, Мускав!

Пăр çинче пурăннă чухне, тăван столицăна, Мускава çитесси пĕр хут çеç мар пирĕн куç умне тухса тăнă. Ун çинчен хумханмасăр шухăшлама та май пулман. Поларлă каççем вăхăтĕнче столицă пире хула мĕнле пурнăçпа пурăнни çинчен, çĕнĕ урамсемпе çуртсем çинчен, театрсенчи премйерăсем çинчен тĕрĕссĕн тата хумханулăн пĕлтерсе тăчĕ. Епĕр пăрпа пĕрле куçса пынă вăхăтра—Мускав йаланах пирĕн асра, пирĕн куç умĕнче тăнă. Мускав пире инçе çула каймашкăн тăван анне пек ăшă кăмăллăн тăрăшса ăсатса кăларса йачĕ. Мускав епĕр чылай вăхăт хушши пăр çинче çÿренине сăнаса асăрхаса пычĕ.

Çак аслă та чи ĕлĕкхи вырăс хули—тĕнчери çĕнтерÿсен хули пулса пырать. Кунтан халиччен пулман транспорлă вĕçевсене хатĕрлесе кăларса йанă, кунта Çурçĕр полюсне каймали експедицине хатĕрленĕ. Кунта, Мускавра, ССР Союзĕн столицинче, аслă ĕçсен, тĕнчери цивилизацине малала йама пулăшакан ĕçсен аслă пуçараканĕ пурăннă тата ĕçленĕ çĕрте, куçса çÿрекен пăр çинчи пурнăç мĕнле пуласси питĕ тĕплĕн шутласа хунă.

Хаклă москвичсем! Епĕр Сирĕнпе тĕлпулас минута кĕтетпĕр. Кунтан, Ленинградран, епĕр Сирĕн пата аллăмăрсене тăсатпăр, сире пурне те ыталатпăр.

Кĕçех тĕлпулăпăр!

ИВАН ПАПАНИН,
ПЕТР ШИРШОВ,
ЕРНСТ КРЕНКЕЛ,
ЙЕВГЕНИЙ ФЕДОРОВ.

Ленинград, мартăн 16-мĕш.

Папанинцăсен кĕтесĕ

ЕЛĔК. Йуçкассинчи вăтам шкулта папанинцăсен кĕтесĕ организациленĕ. Унта герой папанинцăсен сăнĕсем, вĕсен пăрĕ хăш вăхăтра хăш вырăна çитнине кăтартакан, вĕсене пăр çинчен илме кайнă „Таймыр" „Мурман", „Мурманец" карапсем тата „Йермак" пăрçĕмĕренĕн хăш числасенче хăш вырăна çитнине кăтартакан картăсем т. ыт. те пур. Вĕренекенсем папанинцăсен ĕçĕсемпе питĕ интересленеççĕ.

В. Йемелйанов.

Пăр çинчи кунсем

Совет Союз Геройĕ И. Д. Папанинпа калаçни

Пирĕн тăван çĕршыв панă ăслăлăхпа тĕпчев ĕçĕсен планне епĕр йăлтах та пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕмĕр. Пирĕн ĕçе анăçлă пулма епĕр хамăр вăйсене лайăх организацилеме пĕлни, пĕр-пĕрин вырăнне тăрса ĕçлени чылай пулăшрĕ. Пирĕн учонăйсем Федоровпа Ширшов, хăйсен тÿрĕ ĕçĕсемсĕр пуçне, тата хăйсен йулташĕсен ĕçне те туса пычĕç. Федоров, астроном-магнитолог пулнипе, радиопа çыхăнса ĕçлессине йĕркелесе йама, пăтăна лайăх пĕçерме тата ыт. те тума пултарнă. Ширшова врач пулса ĕçлеме тÿр килчĕ, ăна вăл Ленинградрах хатĕрленнĕ. Анчах та врач пурри моральшĕн çеç пулнă. Епĕр шÿтлесе:

—Унтан пулăшувĕ пирвайхи хут тата йулашки хут пулать,—теттĕмĕр.

Анчах та пĕррехине, Федоров чирлесен, Ширшов ăна, ун çине банкăсем лартса, самайах пулăшрĕ.

Хуçалăхри ĕçсене пысăкăн туса пынипе пĕрлех, епĕ тата астрономилĕ, метеорологилĕ сăнавсене те туса пыма пултарнă. Паллă тума чылайах интереслă: кирек хăш полар станци те пирĕн станцинни чухлĕ ĕçпе сахалтан та вунă çын тытмала. Çавăнпа та кун тăршшĕ ĕçпе тулса ларнă пулнă.

Куçса çÿрекен пăр çинче епĕр кино, хамăр пурнăçăн уйрăм вăхăтри ĕçĕсене ÿкертĕмĕр.

Тăхăр уйăх хушши куçса çÿрекен пăр çинче пулнă хыççăн тăван совет халăхĕпе курнăçма саванăçлă.

Пирĕн Ленин хулинчи ĕççынисемпе курнăçни манмала мар пулса йулать. Сĕм çĕрлечченех епĕ, савăннипе хумханăскер, пÿлĕм тăрăх уткаласа çÿресе:

— Йепле паха манăн халăх, пирĕн пĕтĕм тăван çĕршыв, аслă Сталин çыннисем йепле хытă тăрăшаççĕ,—тесе шухăшларăм.

Ленинград, мартăн 16-мĕш.

(ТАСС).

Хĕрÿлĕн кĕтсе илнипе хумхантăмăр

Е. Т. Кренкелпе калаçни

ЛЕНИНГРАД, мартăн 16-мĕш. (ТАСС). ТАСС сотрудникĕпе калаçнă чух Е. Т. Кренкел йулташ вĕсене Ленинград ĕççыннийĕсем хĕрÿлĕн кĕтсе илни çинчен каласа панă.

— Уççăн каласан, пире совет халăхĕ йуратни çинчен епĕр пĕлмесĕр тăма пултарайман. Анчах çакăн пек хĕрÿлĕн те ăшшăн, хумханулăн кĕтсе илессине никам та кĕтмен. Епĕр тăван çĕршыва çитнĕ кун пирĕн автомобилсем Ленинград урамĕсенче пыни пăрçĕмĕренсем океан пăрĕсене сирсе пынă пекех пулчĕ. Ултă километр çурă хушшинче пирĕн машинăсене калама çук нумай çынсем хупăрласа тăчĕç.

Сывлăх сунса саламланă телеграммăсемпе çырусене халĕ те нумай илсе тăратпăр. Хамăн суйлавçăсенчен епĕ çакнашкал телеграммă илтĕм:

„Уфари суйлавçăсем сире çуламла большевикла салам йараççĕ. Округра сирĕнпе курнăçма çав тери хыттăн кĕтеççĕ".

Тепĕр вунă-вунпилĕк кунтан епĕ Уфана кайатăп, Уфара пурăнакан халăхсем, мана ССР Союзĕн Верховнăй Совет депутатне суйласа, мана пысăк чыс турĕç.

Хамăрпа пĕрле епĕр Мускава „Çурçĕр полюсĕ" станцин пур оборудованине те, хамăр йапаласем таранах, илсе пыратпăр. Кунта вĕсене çынсене курмала майлаштарса хумала. Хĕлкаçнă çерти пурлăха Ленинградри Арктика музейне памала пулать. Пирĕн шанчăклă йулташа — „Веселый" йатлă йытăна Мускаври зоологи садне вырнаçтармала пулать.

Куçса çÿрекен станци пухнă ăслăлăх материалĕсене йĕркелес, вĕренес ĕç мĕнле пулмала

Й. К. Федоровпа калаçни

Çурçĕр полюсĕ çине кайнă експедицире пулнă Й. К. Федоров йулташ ТАСС корреспондентне папанинцăсем пăрпа пĕрле куçса çÿренĕ вăхăтра пухнă ăслăлăх материалĕсене мĕнле йĕркелесси, сăнаса вĕренесси çинчен каласа панă.

— Куçса çÿрекен пăр çинче пухнă ăслăлăх материалĕсене йĕркелес, вĕренес ĕç вальли пирĕн експедици составне çаплипех хăварма йышăннă,—тенĕ Федоров йулташ.—Материалсен пĕр пайне Мускавра сăнаса вĕренмеле пулать, тепĕр пайне—Ленинградра. Ку ĕçе тума ăслăлăхпа-тĕпчев институчĕсене тата пысăк специалиссене йавăçтарма шухăшлаççĕ. Çавăн пекех ку ĕçĕн пĕр пайне Ленинградри Арктикă институчĕ тăвать. Вал материалсене тĕпчесе вĕренес ĕç çулталăка йахăн пымала.

Пирĕн опыта никĕсе хурса, центрти Арктикăна малала санаса вĕренес ĕç вальли полюсна Çурçĕр Америкă хушшине çĕнĕ експедици антарса лартни усалă пулассии курăнсах тăрать. Çак тĕллевпех тата пĕрмайах сăнавсем туса пыма полюс çывăхенчех станцисем организацилеме май пур. Çавăн пек вăхăтлăх станцăсене Арктикăна куçарас ĕçе пирĕн авиаци техникипе тума пулать.

Ленинград, мартăн 15-мĕш.

(ТАСС).

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулмали кандидатсене суйласа илесси

20 республикăсемпе крайсем тата облăçсем Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулмали кандидатсен пирвайхи спискисене татăклăнах çирĕплетме Тĕп выставкă комитетне тăратнă.

Украинăра кандидатсен спискине Ульйановск районĕнчи „Догнать и перегнать" колхоза кĕртнĕ. Вăл колхоз гектартан 22,5-шер центнер тĕштырă туса илнĕ.

Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выставкинче пулма Чемеровецк районĕнчи Ленин йачĕпе тăракан колхоз та тивĕçлĕ пулнă. 1937 çулта вăл гектартан 464 центнер сахăр кăшманĕ туса илнĕ.

Мускав облаçĕнчи списакă Димитровск районĕнчи „Победа" колхоз илемлетсе тăрать. Йулашки виçĕ çул хушшинче вăл гектартан 23—25-шер центнер тĕштырă туса илнĕ. 1937 çулта „Победа" колхоз кашни гектартан 35-шер центнер тулă туса илнĕ. (ТАСС).

Куйбышев гидроузелĕнче

КУЙБЫШЕВ, мартăн 15-мĕш. Сталинла саманари аслăран та аслă сооруженин—Куйбышев гидроузелĕн строителствинче хатĕрленÿлĕ ĕçсем сарăлса пыраççĕ. Строителствă материалĕсем турттарса пыраççĕ, пурăнмали çуртсем, çулйĕрсем тăваççĕ, тĕпчевлĕ ĕçсем пыраççĕ.

Аталан илемлĕ те шукăль çыранĕсем çине пирвайхи рабочи поçолкăсем ÿссе ларнă. Кăçалхи çул 25 рабочи городок тăваççĕ. Вунпиллĕкĕшне тĕпрен илсĕн туса пĕтернĕ те ĕнтĕ.

Кирпĕч завочĕ, бетон завочĕсем, йавăç çурмали, алебастр хатĕрлемели тата ытти предприйатисем тăваççĕ.

Куйбышевран 30 километрта, Жигули тăвĕсем çинче социалисăмлă хула тума тытăннă, вăл тĕп вырăнта тăракан хула пулать. Унта кăçалхи çул строителствăри инженерла-техникла работниксемпе служăщчисем вальли 213 çурт туса лартаççĕ. Асфальт сарнă, чечек лартнă вырăнсемпе йешĕл йăвăçсемпе илемлетнĕ урамсенче 800 çын вĕренмелĕх вăтам шкул, 1.000 çын вырнаçмалăх театр пулать, кино, универмаг, гостиницă, ача сачĕсем, йаслĕсем т. ыт. те пулаççĕ. Хулара стадион тăваççĕ.

(ТАСС).

Папанина, Ширшова, Кренкеле, Федорова

Есĕр тăван çĕршыва анăçлăн таврăннă кун Сире, совет халăхĕн паттăр ывăлĕсене, Арктикăн шиксĕр тĕпчевçисене, социалисăмлă ăслăлăхăн чи лайăх представителĕсене ССР Союзĕн ăслăлăхсен Академийĕ хĕрÿлĕн саламлать.

Никам курман хăйулăхпа, нихăçан пулман çирĕплĕхпе ĕçлесе Есĕр, пурнăç çухалассинчен хăрамасăр, куçса пыракан пăрăн пĕтĕм çулĕ тăрăх кунсеренех сăнавлă-тĕпчевлĕ ĕçсем туса пытăр, çапла майпа вара полар тĕнчине тĕпчесе вĕренес ĕçшĕн калама çук хаклă ăслăлăх материалĕсем пухрăр.

Хăвăрăн Çурçĕр полюсĕнчи сăнав-тĕпчевсен пирвайхи результачĕсем çинчен пулмали доклада Есĕр ăслăлăхсен Академинче туса парассишĕн Академи мухтанать.

ССР Союзĕн ăслăлăхсен Академин президенчĕ академик В. Л. Комаров.

Париж коммунарĕсем баррикадă çинче (1871 ç.).

Союзфото репродукцийĕ.

Й у т ç ĕ р ш ы в с е н ч е

Китайри вăрçă

(Мартăн 7-мĕшпе 17-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Таңцзиң Пукоу чукунçулне туртса илме хăтланни темиçе хутчен те ăнăçсăр пулнă хыççăн, йапонцăсем Хенаң провинцин çурçĕр пайĕнче тата Шаңси провинцинче наступлени пуçласа, йулашки вăхăтра хайсен тĕп çапăçу вырăнне хĕвеланăçне куçарнă. Хенаң провинцинче йапонцăсем чукунçул станцисене чылай туртса илнĕ, вĕсем Хуанхе йуханшыв патне çитсе тухнă. Кунта Китай çарĕсем вĕсене хирĕç çав тери хыттăн тăнă, çавна пула йапонцăсем çур уйăх хушши ĕнтĕ малала кайаймасăр çав йуханшывăн çурçĕр çыранĕнче тытăнса тăраççĕ. Партизансемпе Китайăн регуђарлă çарĕсен пĕчĕкрех чаçĕсем кунта йапонцăсем наступлени туса малала кайассине тытса чарса тăраççĕ. Йапони тылĕнче партизансем чылай пысăк пунктсене (Цисаң, Уйуаң, Сӳу тата ыт. те) туртса илнĕ.

Йапонийăн хĕвеланăçне куçарнă тĕп вăйĕсем Хуанхе йуханшывĕ тăрăх Шаңси провинцин кăнтăрпа хĕвеланăç пайĕ патнеле куçса пыраççĕ. Çакăнпа пĕр вăхăтрах Йапони командованийĕ кунта çурçĕртен пысăк вăйсене илсе килнĕ. Фронтăн çак участкинче йапонцăсем чылай пунктсене туртса илнĕ. Анчах та Шаңси провинцинче Китай çарĕсен нимĕнле поражени те пулман. Хайсене хупăрласа илессинчен пăрăнса, вĕсем тăшман çине темиçе йенчен пырса тапăннă. Чи хăрушă пулса тăракан вырăнта, Тунгуаң районĕнче, Китай командованийĕ, чылай вăйсене пĕр çĕре пухса, йапонцăсене Хуанхе йуханшывĕн кăнтăр çыранĕ йенне каçма чарнă.

Хађхи вăхăтра пĕтĕм Шаңси провинцийĕ тăрăх йунлă çапăçусем пулса пыраççĕ. Икĕ йенче те пысăк çухатусем пулаççĕ. Фучен патĕнче виçĕ кун çапăçнă хушăра Китай çарĕсем Йапонипе Манчжури çарĕсене пин салтака йахăн тыткăна илнĕ.

Кăнтăр йенне татса тухса, йапонцăсем хайсен тылне тата ытларах çаратса хăварнă. Çакăнпа Китай командованийĕ усă курнă. Китайăн 8-мĕш çарĕн чаçĕн наступленине ăнăçлăн сарса пырса, вĕсем йапонцăсенчен виçĕ пысăк хула туртса илнĕ.

Вăтаçĕрти Шанхай—Нанкин районĕнче пысăк хуласем çеç йапонцăсен аллинче тăраççĕ. Кунта Китай партизанĕсем Йапони позицисем çине калама çук хыттăн наступлени туса пыраççĕ. Йулашки вăхăтра çак районта Китай чăçĕсен позицийĕсем çирĕпленнĕ.

Хађхи вăхăтра Китай тылĕнче оборонă тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Йапони империалисăмне хыттăн отпор парас тесе китайцăсем мĕлйунла çар хатĕрлеççĕ.

(ТАСС)

Голландири фашиссен ăнăçман провокацийĕ

Голланди полицийĕ Амстердамра ССР Сойузĕпе Голланди хушшинчи суту-илӳ ĕçĕсене туса тăракан "Экспортхлеб" йатлă акционерлă обшчествăна кĕтмен çĕртен пырса ухтару тунă. Голландири хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, полицине "Экспортхлеб" акционерлă обшчествин çуртĕнче хĕçпăшалсен пысăк запасĕ сыхланса усранат, тесе пĕлтернĕ.

Паллах, ухтарнă чух нимĕнле хĕçпăшал та тупман, вара полицин, пире тĕрĕс мар хыпарсем парса йăнăштарнă, тесе йышăнмала пулса тăнă.

Амстердамри "Экспортхлеб" акционерлă обшчествин председателĕ Нестĕров йулташ Голландин ССР Сойузĕпе суту-илӳ тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетне—полици хăйне çапла тыткалани Совет Сойузĕпе Голланди хушшинчи суту-илӳве пысăк сийен кӳме пултарат, тесе астутарса, полицин çаккунсăр ĕçĕсем пирки тăтăклă протест панă, Голланди влаçĕсенчен ку ĕç пирки ăнлантарса пама ыйтнă.

Хăйĕн Нестеров йулташ патне йанă çырувĕнче Комитет çапла пĕлтернĕ: Голланди влаçĕçем, уйрăмăн илсен Амстердам хулин бургомистрĕ де-Фђухт, çак ĕç пулнăшăн тарăнăн пăшăрханаççĕ, полици суйа елек панă тăрăх çапла тунă, тесе пĕлтернĕ.

Голланди пичетĕнче кăтартнă тăрăх, Голланди полицийĕ Амстердамри „Экспортхлеб" акционерлă обшчестви çине çапла тапăнни фашиссемпе вĕсен агенчĕсен — троцкиссемпе шургвардейцăсен провокацийĕ тăрăх пулнă.

(ТАСС).

Йапони полицийĕ провокацилĕ ĕçсем тума чарăнмаст

ВЛАДИВОСТОК, мартăн 16-мĕш. (ТАСС). Кунта Йапони полицийĕ çĕнĕ провокацилĕ ĕçсем туни çинчен тата Хакодере (унта кăмрăк илме кĕрсен) тытса чарнă „Кузнецкстрой" пароходăн пассажирĕсемпе командинчен мăшкăласа кулни çинчен сведенисем илнĕ.

Мартăн 9-мĕшĕнчен тытăнса, Йапони жандармерийĕ пирĕн çынсене ушкăн-ушкăнпа пароход çинчен жандарм управленине илеиле кайат, унта вĕсене киревсĕрĕн допроссем тăваççĕ, йăлтах шпионла сведенисем ыйта-ыйта тăрăхтараççĕ. Çапла допроссем тунă чухне пирĕн çынсене тăван çĕршыва сутса тăшман йенне куçма сĕнеççĕ. Допроссем тунă чухне чылай тĕлсенче асаплантараççĕ, хĕнеççĕ, ăна медицинăлă актсем çинчен кăтартса çырса хунă. Допроса чĕнсе илнисенчен хăшĕ-пĕрисем кайала пароход çине таврăнман, вĕсене тĕрмене хупса хунă. Параход капитанне тĕрмере уголовлă преступниксемпе пĕрле тытса усраççĕ.

Çак бандитла ĕçсене хирĕç пирĕн полпредствă тăтăклăн протест панă, анчах ĕç лайăхланман. Кĕтме пулат, Йапони влаçĕсем хăйсен çак киревсĕр ĕçĕсене витсе хурас тесе, „Вымпелпа" туса иртернĕ пек суд вăййи туса ирттерме те, капитана тĕрмене хупма та пултарĕç. Çак пĕтĕм провокацисен тĕллевĕ,—„Вымпелпа" пулнă ĕçри пекех, çак пулса тăрат: совет граждăнĕсене çавăрса илесси, вĕсемпе Йапонин ССР Сойузĕнче тытса чарнă шпионсемпе улăштарса илесшĕн тăрăшни. Кун пирки нимĕн иккĕленмели те çук.

Италипе Германин Испанири интервенцийĕ

Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Кадиксра калама çук нумай вăрçă хатĕрĕсем пушатаççĕ, вĕсене унта Испанири пăлхавçăсем вађђи илсе пынă. Иртнĕ ерне вĕçĕнче фашиссен виçĕ суту-илӳ карапĕ Италире тунă нумай бомбардировшчик-самођотсем, 100 ытла çар грузовикĕ тата нумай пулеметсем пушатса хăварнă.

Испанин йутçĕршыв ĕçĕсен министерстви пĕлтернĕ тăрăх хађхи вăхăтра Германи Испанири пăлхавçăсене çĕнĕ çарсем йарса пама хатĕрленет. Йатарласах вĕрентнĕ штурмовиксем, офицерсем тата çар експорчĕсем—пурĕ 30 пин çын мартăн 14-мĕшĕнче Германи пароходĕ çине ларса Испанине кайма тухнă.

(ТАСС).

Германин сывлăш-çар вăйĕсем Испанире

ПАРИЖ, мартăн 15-мĕш. (ТАСС). Гавас агентстви Испанин оборонă министерстви пĕлтернипе парат. Çав пĕлтерӳ тăрăх, хĕвелтухăçри фронтра пăлхавçăсен сывлăшри вăйĕсен составĕнче Германирен пынă çакăн пек сывлăш-çар вăйĕсем çапăçува хутшăннă:

Икĕ ушкăн, кашниншех тăваттăшар ескадрилийĕ, вăл ескадрилийĕсем „Гейнкел-111" текен бомбардировшчиксенчен тăраççĕ. Çав ушкăнсенчен пĕри хĕвелтухăçри фронта икĕ ерне кайала, Германирен Испанине Франци территори урлă вĕçсе каçса пынă.

Истребителсен икĕ ушкăнĕ, кашни ушкăн „Мессершмидт-109" самођотсен тăвата ескадрилийпе „Гейнкел-51" самођотсен икĕ ескадрилийинчен тăрат.

Разведчиксен пĕр ушкăнĕ, унта икĕ ескадрилийĕ, кашнинче „ДО-17" текен 22-шер самођотпа „Гейнкел-45" текен пĕрер патруђ самођочĕ пур,

Кунсăр пуçне зенитлă артиллери пур:

Виçĕ йăвăр зенитлă батарейă—88 миллиметрлă орудисемпе.

Икĕ çăмăл зенитлă батарейă—37 миллиметрлă орудисемпе.

Кашни батарейă çумĕнчех 20 миллиметрлă икĕ зенитлă пулемет пур.

Германин çак сывлăш-çар вăйĕсене нимĕç фашисĕ Вейдт генерал йертсе пырат, вăл вăйсем Испанин хĕвелтухăç фронтĕнче пăлхавçăсемпе интервентсен наступленине пулăшса пыраççĕ.

Германин çак сывлăш-çар вăйĕсен аслă командирĕсемпе офицерĕсем, унтер-офицерĕсем çавăн пекех тата рйадовой состав—пĕтĕмпех фашисла Германири действитеђнай çар службинчи нимĕçсенчен тăрат.

Фашисла захватчиксем Австрире хуçаланаççĕ

Чехословаки хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Австрине Германи полицин 16 пин çынĕ пырса çитнĕ. Германи полицийĕпе пĕрлешекен Австри полицине тĕпренех суйласа тасатнă, тасату хађ те пĕтмен-ха. Австри полицинчи пысăк чунлă пулмай çынсене арĕсленĕ:

Шултра хуласенче — Венăра, Линцра, Зађцбургра, Инсбуркра мĕн пур гостиницăсемпе ресторансене Германи офицерĕсем, Германи çарĕсем тулнă. Пĕлĕт çинче йаланах Германи самођочĕсем йаванса çӳреççĕ, вĕсем хађ Австрире темиçе çĕршерĕн хисеплеççĕ.

Пĕтĕм Австри тăрăх нумай çынсене арĕслеççĕ. Пĕр Венă тĕрмине кăна 2.600 çын хупса лартнă. Пур тĕрмесем те тулса ларнă, çавăнпа та пит нумай арĕсленĕ çынсене концентрацилĕ лагерсене ăсатаççĕ.

Австри правителствăлă тата обшчествăлă мĕн пур организацисене Германири пек туса йĕркелеççĕ. Австри посођствисене пур çĕршывсенче те пĕтереççĕ.

(ТАСС).

Суйлав саккунне вĕренеççĕ

Кăшаркассинчи (Сĕрпӳ районĕ) „Пионер" колхозра уйхир бригадисем 7. Март уйăхĕн малтанхи кунĕсенче çак 7 бригадăра суйлав Положенийне вĕренмели кружоксем организацилерĕç, вĕсене йалти учителсем йертсе пыраççĕ. Кружоксен малтанхи заңатинчех пурĕ 175 суйлавçă пулчĕç.

Н. Окунев.

КОММУНĂ ДЕКРЕЧĔСЕМ

Регуђарлă çара пĕтерни

Париж коммунĕ çапла йышăнат:

... 2. Нацилĕ гвардисĕр пуçне Парижре нимĕнле çар вăйĕ те пулмала мар йе Парижа кĕртмеле мар.

3. Çар службинче пулма пултаракан граждăнсем пурте нацилĕ гвардисен ретне кĕреççĕ.

Париж коммунĕ.

Ратуша, 1871 çулхи мартăн 20-мĕш.

(„Офицйальный журнал" çинче 1871 çулхи мартăн 30-мĕшĕнче пичетленнĕ постановленирен).

Хуçисем пăрахса хăварнă мастерскойсем çинчен

Париж коммунĕ,

хăйсен граждăнла обйазанносĕсене пурнăçа кĕртме тата хăйсен рабочийĕсен интересĕсене шута илме килĕшмен хуçасем хăйсен нумайĕш мастерскойĕсене пăрахса хăварнине асра тытса...

çапла йышăнат:

... 2. Практикăлă ĕçсем туса иртерме палăртса доклад тăратас, çав ĕçсем тăрăх вăл мастерскойсене халех ĕçлеттерме пуçламала пултăр, анчах мастерскойсене ĕçлетерессине вĕсене пăрахса хăварнă тарнан-хуçасен вăйĕсемпе мар, унта ĕçлекен рабочисен кооперативлă ассоциаци вăйĕсемпе тумала пултăр.

3. Çав рабочисен кооперативлă ассоциацисен устав проектне туса хатĕрлес..

Париж, 1871 çулхи апрелĕн 16-мĕш.

(„Офицйальный журнал" çинче 1871 çулхи апрелĕн 17-мĕшĕнче пичетленнĕ декретран).

Чиркӳ государствăран уйăрăлат

Париж коммунĕ,

франци республикин пĕрремĕш принципĕ ирĕклĕх пулнине... тата фактсем кăтартса панă пек, духовенствă ирĕклĕхе хирĕç монархи тунă преступленилĕ ĕçсене хутшăннине асра тытса,—çапла йышăнат:

Ст. 1. Чиркӳ государствăран уйăрлат.

Ст.2, Чиркӳ çыннисен бӳджечĕ пĕтет.

Ст. 3. Тĕн конгрегацийĕсен аллинче тăракан тĕкĕнмеле мар текен пурлăхсене,—чĕрĕ тата чĕрĕмаррисене,—нацилĕ харпăрлăх тăваççĕ..

Париж коммунĕ.

(„Офицйальнай журнал" çинче 1871 çулхи апрелĕн 3-мĕшĕнче пичетленнĕ декретран).

Буржуазин пушă хватерĕсене реквизици туни

Париж коммунĕ,

Парижа иккĕмĕш хут бомбăсемпе çĕмĕрнĕ чухне сийен курнисене коммунă çуртйĕр туса пама тивĕçлине тата çакна васкавлă йĕркепе тума кирлине асра тытса,—çапла йышăнат:

Ст. 1. Пушă ларакан хватерсене пурне те реквизици тăваççĕ.

Ст. 2. Вăл хватерсене бомбăсемпе çĕмĕрекен кварталсенче пурăнакансене вĕсен тивĕçлĕ ыйтăвĕсем тăрăх, памала..

Ст. 4 Муниципалитетсен çак декрета халех пурнăçа кĕртме тытăнмала. Вĕсен кунсăр пуçне тата май пур таран, граждăнсем ыйтнă тăрăх, кусса çӳремели хатĕрсем тупса памала.

Париж, 1871 çулхи апрелĕн 25-мĕш.

(„Официальный журнал" çинче 1871 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче пичетленнĕ декретран).

Париж коммунĕ вăхăтĕнче Ӳкерчĕ тĕне хирĕçле карикатурăсем.
Сойузфото репродукцийĕ.

Париж коммунарĕсем 1871 ç.
Сойузфото репродукцийĕ.

Париж коммунĕн ĕçĕсем çинчен ăнлантараççĕ

ИЕЛЧĔК. (Телефон тăрăх). Мартăн 15-мĕшĕнче район центрĕнче вулав çурт пуçлăхĕсемпе агитаторсен районри канашлувĕ пулчĕ. Канашлура МОПР йачейкисен ĕçĕсене вăйлатасси çинчен сӳтса-йаврĕç. Мартăн 18-мĕшĕнче—Париж коммунĕ 67 çул тултарнă кунхи каçхине кашни йалтах вечерсем иртерме хатĕрленчĕç.

МОПР кунĕпе Париж коммунĕн ĕçĕсем çинчен ăнлантарма район центрĕнчен ĕçлекен 20 коммунист-агитаторсем йалсене кайрĕç.

Ф. Майков.

Пайан Париж коммунĕн кунĕ—МОПР кунĕ

1871 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче Париж коммунĕ туни çинчен пĕлтернĕ. Çапла 67 çул ĕлĕкрех, Франци столицинче, Парижра, историре чи малтан государствă влаçĕ рабочи клас аллине куçнă.

Париж коммунĕ 72 кун пурăннă. Ăна контрреволђуци аркатса тăкнă. Çапах та коммунарсен паттăрла çапăçăвĕсене ĕмĕр асăнĕç, мĕншĕн тесен, вĕсем чи малтан експлоататăрсен стройне кисрентернĕ, капиталисăма чи малтан калама çук хытă çапнă.

... 1851 çултан пуçласа 1870 çула çитиччен Франци спекуђантсемпе авантӳриссен шайки аллинче тăнă. Вĕсем пуçĕнче пӳтсĕр Луи Бонапарт, хăйне император III Наполеон текенскер, пулнă. Çĕршывра револђуцилĕ шухăшсем вăйланса пынă. Влаçра тăракансем, халăх восстани тăвассине чарса хурас тесе, Пруçипе вăрçă пуçарса йанă. Çав вăрçă пуçламĕшĕнчех Луи Бонапарт пуç пулса тăракан Францин пĕтĕм çĕреклĕхĕ курăннă. 1870 çулти çентаберте Седан патĕнчи вăрçăра пруссаксем III Наполеон çарнĕ пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă. Çав Седан патĕнчи çапăçура Франци çарне çĕмĕрсе тăкни çинчен пĕлтернĕ хыçăра илсенех, Париж пролетариачĕ восстани тунă. Республикă туни çинчен пĕлтернĕ.

Анчах, восстани тăвакансенчен вăртăн, буржуази „нацилĕ оборонă правителстви" тунă. Ку правителствă—„нацийе улталаса сутакан правителствă пулни часах палăрнă. Çав правителствă хĕçпăшалланнă рабочисенчен Франци çĕршывне çĕмĕрсе тĕнĕ Пруçи çарĕсенчен те ытла хăранă. Вăл çĕнтерсе пыракан нимĕç çарĕсене хирĕç кĕрешме тăрăшман, пуринчен ытла Парижри револђуцийе пусарса лартма тăрăшнă. Револђуцийе пусарса лартма çав правителствă Францин чи хайар тăшманĕпе Пруçи диктаторĕ Бисмаркпа вăртăн союз тунă. 1871 çулти мартăн 18-мĕшĕнче правителствă Парижри нацилĕ гвардире тăракан пролетарисен отрйачĕсене хĕçпăшаллантарма, вĕсен рабочисен укçипе сутăн илнĕ туписене тытса илме хушнă. Рабочисем хăйсен туписене кăна мар сыхласа хăварнă, вĕсем салтаксене те хăйсен йенне çавăрнă, правителствăна Парижран хăваласа йанă. Парижра восстани тăвакан рабочисем пуçпулса тăнă. Ĕлĕкхи хуçасем — капиталиссем, помещиксем, министрсем, генералсем—Париж хулинчен тухса тарнă та Версађ хулине вырнаçнă.

Францири експлоататăрла клас тата Парижри рабочи клас историре чи малтанхи хут пĕр-пĕрне хире-хирĕç тăнă. Рабочи клас Парижра ĕçсыннисене хăй тавра пухса пĕтĕçтернĕ.

Парижра рабочи клас влаçра тăнă, Францин ытти пайĕсенче пĕтĕмпех ĕлĕкхи йĕрке йулнă. Парижра министерствăсенче, государствă учрежденисенче, районти тытăмсенче хулари рабочисем, чухăнсем тата вĕсемпе сыхăнса тăракан револђуцилĕ интеллигентсем ĕçленĕ. Коммунă Совечĕнчи 85 члентан 25 рабочи пулнă (Совет членĕсен пĕр пайĕ, Парижăн буржуалă районĕсенчен суйланнисем, Коммунă Совечĕн ĕçне пĕртте хутшăнман). Темиçе пин пролетарисемпе пролетаркăсене йертсе пырас вырăна ĕçе лартнă пулнă. Халăх хушшинчен талантлă организаторсем, массăсен çулпуçĕсем, коммунăшăн парăнса кĕрешекенсем, хăйсен пурнăçне паракансем çĕкленнĕ. Вĕсем хушшинче çĕршер, пиншер хĕрарăмсем пулнă. Коммунă туни—малтанхи хут халăхăн нумай йышнĕ вађђи çĕнĕ чăн-чăн демократи, пролетарилĕ демократи тума тăрăшни пулнă. Париж коммунĕ рабочи клас диктатурин малтанхи опычĕ пулнă.

Коммунă рабочи клас хăйĕн диктатурине тума шутланине пурнăçа кĕртсе пынă. Государствăн кивĕ машинине çĕмĕрсе çĕнĕ влаç оргăнĕсене тума тăрăшнă. Коммунă кивĕ çар вырăнне—халăха хĕçпăшаллантарнă. Коммунă чиркĕве государствăран, шкула чиркӳрен уйăрнă. Вăл должнăçра тăракан çынсене пурне те халăх суйласа лартмала тата вĕсем халăха пăхăнса тăмала йĕрке тунă. „Çапла, — тесе çырнă Ленин—Коммунă çĕмĕрĕлнĕ государствă машинине ытларах тулли демократипе „кăна" улăштарнă пек курăнат: йалаңлăх çара пĕтерни, должнăçра тăракан çынсене пурне те йалтах суйласа лартни тата улăштарни. Анчах чăннипе çак вăл пĕр йышши учрежденисене принципла урăх йышши учрежденисемпе улăштарнине „кăна" пĕлтерет". (**Ленин.** соч. т. XXI, стр. 398).

Коммунă производствăсене контрођ туса тăма тытăннă. Версале тарнă капиталиссен предприйатийĕсене Коммунă рабочисен аллине пама пуçланă. Коммунă сакăр сехетлĕ ĕçкунĕ тунă тата предприйатисенче ĕç условисене лайăхлатма чылай тăрăшнă. Чухăнсен заклада хунă йапалисене укçасăрах кайала тавăрса панă. Коммунă хăйĕн пĕр прокламацийĕнче: „мĕнпур çĕре—хресченсене, машинсене—рабочисене, пурне те ĕç пултăр", тесе çырнă. Анчах Коммунă хăйĕн ĕçне пĕтĕм анлăшĕпех сарайман. Çавна тума коммунăра пĕр-пĕринпе килĕштерейменни пулни, тата пуринчен ытла—Парижа ун çине тапăнса пыракан тăшманран хӳтĕлесе тăмала пулни чăрмантарнă.

Коммунă пурăннă кунсенче Париж пĕтĕм çĕршывпа сыхăнса тăраймаи. Париж пролетариачĕ çав кунсенче хресченсен массипе çыхăнайман. Коммунăна хресченсемпе çыхăнса тăма столицăна хунăрласа тăракан тăшмансем кăна мар. Коммунă руководителĕсем пролетарилĕ Париж хресченсемпе çыхăну тытсан версађцăсене парăнас çуккине ăнланса илеймени те чăрмантарнă. „Францири 48-не 71 çулсенчи револђуцисем, пуринчен ытла, хресченсен разервисем буржуази йенче пулнинчен пĕтнĕ" (**Сталин.** „Вопросы ленинизма", стр. 78, 10-ое издание).

Ленин тата Сталин Париж Коммунĕн опытне, малтанхи хут пролетарилĕ влаç тунин опытнĕ, питех те пысăк вырăна хурса хакланă. Пирĕн Октаберти револђуци вăхăтĕнче, Совет влаçне тунă чухне Коммунăн опытне шутра тытнă. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе ССР Сойузĕнче социалисăм çĕнтерчĕ. Совет çĕршывĕнче тĕнчери чи демократилĕ Конституци—Сталинла Конституци ĕçе кĕчĕ. Совет халăхĕ пуйан та културлă пурнăç турĕ.

... Париж рабочийĕсем восстани пуçарачен малтанах К. Маркс—вăхăт çитиччен, револђуцилĕ кĕрешĕве хатĕрлесе пуç пулса йертсе пыма пултаракан пролетарилĕ парти туса çирĕплетиччен, çапăçава тухма йураманни çинчен астутарса тăнă. Анчах восстани пуçлансанах вара, Маркспа I Интернационал тӳррех Коммунă майлă тăнă, ăна кĕрешме тата çĕнтерме пур майсемпе те пулăшса пынă.

Париж Коммунĕн чи пысăк çитменлĕхĕ, вăл—унăн хăй хыççăн халăх массине йертсе пыма пĕлекен, мĕншĕн кĕрешмелине, мĕн тума пултарассине пĕлсе тăракан парти пулманни. 1871 çулта Францире „...револђуцийе йертсе пырассине икĕ парти пайлăн туса пынă, вĕсенчен пĕрне те коммунисла парти тесе калама çук". (**Сталин.** „Вопросы ленинизма", стр. 91, изд. 10-ое).

Пролетарилĕ парти, йертсе пыракан, йăнăшсем тăвассинчен асăрхаттаракан парти çук пирки массăсен пуçарăвĕпе паттăрлăхĕ те ăнăçлăн усă парса пырайман. Маркс Коммунăна йăнăшсем тăвасран йаланах астутарса тăнă, пулăшса пынă. Майăн 11-мĕшĕнче, Коммунăна çĕмĕрсе тăкаччен темиçе кун малтанрах, Маркс Коммунăна версађцăсемпе Бисмарк вăрттăн договор туни çинчен пĕлтерме ĕлкĕрнĕ. Майăн 13-мĕшĕнче Варленпа Франкĕђ коммунарсем (Интернационал членĕсем) патне Маркс „усăсăр иртнĕ вăхăтра" тумасăр йулнă ĕçсене тума пулни çинчен çырат. Анчах майăн 21-мĕшĕнче версађцăсем Парижа пырса кĕнĕ. 1871 çулта рабочисен револђуцийĕ çĕнтерсе 72 кун кăна пурăннă. Пĕтĕм буржуалă-помешчикла Иевропă Коммунăна хирĕç пĕрлешнĕ пулнă. Коммунăна пусарса лартма Пруçи пуçлăхĕ Бисмаркпа Версађ палачĕ Тйер пĕрлешнĕ.

Парижа пырса кĕрсен версађцăсем коммунарсене питех те хайаррăн, тискеррĕн вĕлерсе пĕтернĕ. Çынсене касса вакласа вĕлерсе пĕтерес ĕçе генерал Галифе йертсе пынă. 30 пин çынна вĕлерсе тăкнă, вăл шутра Коммунăн уйрăмах пит паллă кĕрешĕвçисенчен пĕри—Варлен та пулнă. 50 пин çынна тĕрмене тытса хупнă. 36 пин çынна тĕрмере лартма тата сылкăна йама суд тунă. Çапла асаплантарнă Париж халăхне вăл буржуазисĕр тата буржуазийе хирĕç тума хăйнăшăн.

* * *

Хађхи вăхăтра фашиссем тискеррĕн йун тăкса пĕтĕм тĕнчери револђуцилĕ йухăма пĕтерсе лартасшăн. Анчах фашисла диктатурăлă çĕршывсенчи ĕçсыннисем хушшинче пусмăрлакансене хирĕç пырасси, фашиссене хирĕç тăрасси, фашиссĕле кураймани ӳссе пырат. Фашиссене хирĕçле халăх фрончĕ вăйлансах пырат. Çавна хирĕç фашиссем пит хăйаррăн тата ирсĕррĕн шурă террор туса ответлеççĕ.

Гитлерăн, Муссолинин тата вĕсен тӳремшчикĕсен тискер ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларакан организацисен ретĕнче—МОПР хисеплĕ вырăнта тăрат. Коминтернăн VII Конгресĕнче йулашкинчен каланă сăмахра Димитров й. МОПР-а фашисăма хирĕç, миршăн тата социалисăмшăн кĕрешекен ĕçсынни класĕсен çарĕн „Хĕрлĕ хĕресĕ" туса йама чĕннĕ. Чылай çĕршывсенче МОПР ку тĕлĕшпе сахал мар ӳсĕмсем турĕ. Малти вырăнта Испанин паттăр „Хĕрлĕ пулăшувĕ" тăрат. Вăрçăлă-фашисла пăлхав пуçлансанах „Хĕрлĕ пулăшу" республикă çарĕн санитарлă ĕçĕсене туса пыракан организаци пулса тăнă. Хађхи вăхăтра МОПР Испанире тăлăха йулнă хĕрарăмсемпе ачасене, вăрçă пыракан вырăнтан тарса тухнисене тата ыттисене те пулăшакан организаци пулса тăрат. Испанире МОПР-та 600 пин член тăрат. МОПР организацийĕ ытти çĕршывсенче те пысăк ĕçсем туса тăраççĕ. МОПР-ăн чикĕлешĕнчи секцийĕсем Германи халăхĕн çăлпуçне—Теђман йулташа, Гитлĕр тĕрминче асапланакана; Советла Венгрин геройне—Ракоши йулташа; Финђандири рабочи класăн çулпуçĕсенчен пĕрине—Антикайнен йулташа, фашисăм тĕрмесенче хупса усракан ытти нумай пин çынсене ирĕке кăларассишĕн пĕрмайах тăрăшаççĕ. Фашисăма хирĕçле халăх фрончĕн пур организацийĕсем те фашисла террора хирĕç фашисăм тыткăнĕнчисене ирĕке кăларассишĕн, фашисăма хирĕç кĕрешекенсем хĕсĕрлĕве лексен, вĕсене хӳтĕлессишĕн кĕрешĕççĕ. Испанин паттăр халăхне сыхлассишĕн, Китай халăхне сыхлассишĕн кĕрешеççĕ.

ССР Сойузĕнче МОПР нумай мĕлйунлă организаци пулса тăрат, унăн актив—рабочисем, колхозниксем, служашчисем, вĕренекенсем, килхуçи хĕрарăмсем нумай пинĕн шутланаççĕ.

Фашисла террорăн тискерлĕхĕ—фашисла диктатурă вăйлине пĕлтермест, вăл—фашисла диктатурă вăйсăррине пĕлтерет. Фашисăм—хайар влаç, анчах вăл тĕрекçĕр. Фашиссем влаçа алла илни вăл „...буржуази влаçа ĕлĕкхи парламентарисăм метачĕсемпе, буржуалă демократи методĕсемпе тытса тăма пултарайманнине, çавăн пирки унăн хăйĕн шалти политикинче террорла управлени политики çине куçма тивнине кăтартакан паллă...", çавнашкалах тата вăл „...буржуази хађхи лару-тăруран текех тулти ĕçсенче мирлĕ политикă никĕсĕ çинче тăнине тухма пултарайманнине, çавăн пирки унăн ирĕксĕрех вăрçă пуçарса йарас политикă тытса пыма тивнине кăтартакан паллă". (**Сталин.** „Вопросы ленинизма", стр. 545, изд. 10-е).

Çĕршыв ăшĕнче—рабочи класа пусмăрланипе тискер террор, тулти ĕçре—чăрсăрла вăрçăлă авантӳрăсемпе вăрă-хурахла çаратас политикă,—ак çакăн пек фашисăмăн ăшчиккийĕ.

Фашисла террор иртĕнсе кайнине хирĕç, вăрçă чĕртекенсен провокацийĕсене хирĕç пĕтĕм тĕнчери пролетариатпа Совет халăхĕ, рабочи класăн пĕтĕм тĕнчери туслă пĕрлĕхне çирĕплетнипе, демократипе прогресăн мĕнпур вăйĕсене пĕтĕçтернипе Совет Сойузĕн оборонă вăй-хăватне çирĕплетнипе ответлеççĕ.

Йалхуҫалăхĕнче малта пыракан стахановецсемпе специалиссене 1937 ҫулта йалхуҫалăхĕнче кăтартулă ĕҫленĕшĕн премилесси ҫинчен

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ҫулти мартăн 2-мĕшĕнче йышăннă постановлени

Вайла тырпулшăн кĕрешес ĕҫре Чăваш республикĕнчи колхозсем иртнĕ 1937 ҫулта пысăк ҫитĕнӳсем турĕҫ: вăтам шутпа гектартан 15,1 центнер тĕштырă туса илнĕ, вăл шутра: ыраш — 16,3 центнер, сĕлĕ — 16,6 центнер, тулă — 12,8 центнер. Йалхуҫалăхĕ ҫĕнĕ йышши машинăсем туйанчĕ. МТС тракторĕсемпе уса курас ĕҫ нумай аванланчĕ, 1937 ҫулта 15 вайлă трактор пуҫне вăтам шутпа, ҫемҫе суха ҫине куҫарсан, 693 гектар сухаланă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре те чылай ҫитĕнӳсем тунă.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе колхозсемпе колхозниксем савăнăҫлă, пуйан та культурлă пурнăҫан аслă ҫулĕ ҫине тăчĕҫ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йалхуҫалăхĕнче малта пыракансен 1937 ҫулхи кăтартулă ĕҫĕсене палăртса, **ҫапла йышăнат**:

1937 ҫулта тĕштырăсемпе техникăла культурăсем туса илес ĕҫре, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре мала тухнă йалхуҫалăх стахановецсемпе специалиссене хаклă подаркăсемпе тата укҫан преми парас:

1. **М. Г. Долгов** йулташа—Патăрйел районĕнчи „Ҫăлтăр" колхоз председателне — вăл 1937 ҫулта 754 гектар ҫинчен вăтам шутпа гектартан 150 пăт тĕштырă туса илнĕ, — ҫĕвĕ ҫĕлемели машинă тата 200 тенкĕ укҫа.

2. **Л. Острйаков** йулташа — Патăрйел районĕнчи „Хĕрлĕ Туҫа" колхоз председателне — вăл 1937 ҫулта кашни гектартан 138 пăт тĕштырă туса илнĕ, — ҫĕвĕ ҫĕлемели машинă.

3. **А. А. Курицын** йулташа—Патăрйел районĕнчи „Комбайн" колхоз председателне—вăл 1937 ҫулта кашни гектартан 122 пăт тĕштырă туса илнĕ, — ҫĕвĕ ҫĕлемели машинă.

4. **Ф. П. Михейев** йулташа—Молотов йачĕпе тăракан колхоз (Вăрнар р.) председателне — вăл 1937 ҫулта кашни гектартан 117 пăт тĕштырă туса илнĕ, — кĕсйене чиксе ҫӳремели сехет.

5. **А. Н. Николайев** йулташа—Вăрнар районĕнчи „Пĕрлешӳ" колхоз председателне—вăл 1937 ҫулта кашни гектартан 121 пăт тĕштырă туса илнĕ—250 тенкĕ укҫа.

6. **П. Ф. Филимонов** йулташа—Вăрнар районĕнчи „Кĕҫĕн Ҫавал" колхоз председателне — вăл 1937 ҫулта кашни гектартан 117 пăт тĕштырă туса илнĕ, — 250 тенкĕ укҫа.

7. **А. А. Йаблонский** йулташа—Улатăр районĕнчи „Путь Ильича" колхоз председателне — вăл 1937 ҫулта 2520 гектар ҫинчен гектартан 103 пăт тĕштырă туса илнĕ, — 150 тенкĕ укҫа.

8. **А. П. Миронов** йулташа—Елĕк районĕнчи „Доброволец" колхоз председателне — вăл вăтам шутпа гектартан 105 пăт тĕштырă туса илнĕ, — сĕтел ҫине лартмали сехет тата 100 тенкĕ укҫа.

9. **А. М. Максимов** йулташа—Елĕк районĕнчи „Хĕрлĕ Сормово" колхоз председателне—вăл вăтам шутпа гектартан 106 пăт тĕштырă туса илнĕ, — сĕтел ҫине лартмали сехет тата 100 тенкĕ укҫа.

10. **М. А. Афанасйев** йулташа—Елĕк районĕнчи „Майăн 1-мĕш" колхоз председателне—вăл вăтам шутпа гектартан 110 пăт тĕштырă туса илнĕ, — 150 тенкĕ укҫа.

11. **Н. К. Константинов** йулташа — Елĕк районĕнчи „Смычка" колхоз председателне—вăл кашни гектар пуҫне 118 пăт ыраш, 170 пăт кĕрхи тулă, 118 пăт сĕлĕ туса илнĕ, — 200 тенкĕ укҫа.

12. **С. П. Петров** йулташа—Елĕк районĕнчи Пиҫенер йалĕнчи „Майăн 1-мĕшĕ" колхоз председателне—вăл гектар пуҫне 106 пăт тĕштырă туса илнĕ, — кĕсйене чиксе ҫӳремели сехет.

13. **П. А. Бурмистров** йулташа—Йелчĕк районĕнчи „Ҫĕнĕ Ишчерйаково" колхоз председателне— вăл гектар пуҫне 155 пăт тĕштырă туса илнĕ, — ҫĕвĕ ҫĕлемели машинă.

14. **В. Ф. Дергунов** йулташа—Йелчĕк районĕнчи „КИМ" колхоз председателне—вăл 698 гектар ҫинчен гектар пуҫне 140 пăт тĕштырă туса илнĕ,—250 тенкĕ укҫа тата сĕтел ҫине лартмали сехет.

15. **А. С. Чернов** йулташа — Йелчĕк районĕнчи „Хĕрлĕ часовой" колхоз председателне — вăл гектар пуҫне 104 пăт тĕштырă туса илнĕ,—сĕтел ҫине лартмали сехет тата 100 тенкĕ укҫа.

16. **И. Й. Илйин** йулташа—Крупскайа йачĕпе тăракан колхоз председателне (Йелчĕк районĕ)—вăл гектар пуҫне 110 пăт тĕштырă туса илнĕ,—150 тенкĕ укҫа.

17. **А. С. Левый** йулташа—Йелчĕк районĕнчи „Осоавиахим" колхоз председателне — вăл гектар пуҫне 112 пăт тĕштырă туса илнĕ,—200 тенкĕ укҫа тата сĕтел ҫине лартмали сехет.

18. **А. Й Иефремов** йулташа—Йĕпреҫ районĕнчи „Путиловка" колхоз председателне—вăл гектар пуҫне 104 пăт тĕштырă туса илнĕ,—ҫĕвĕ ҫĕлемели машинă.

